С(Чув)
К 62
7461. Чув

КОЛЬЦОВ

# САВĂСЕМ



У461 чув

Национальная библиотека ЧР
4-007461

... ВОЗВРАТА

... НА БЫТЬ
... Е. ПОЗЖЕ
... ЕСЬ СРОКА

Количество пред. выдач



КĔÇТУК КОЛЬЦОВ

# Сăвăсем

ЧĂВАШ АССР КĔНЕКЕ ИЗДАТЕЛЬСТВИ
Шупашкар — 1963

А. Кольцовпа С. Аслан
пухса хатӗрленӗ

Художник Э. М. Юрьев

Ч 7461-чув.

ПРОВЕРЕНО
20

## КĔÇТУК КОЛЬЦОВ

Карели фронтĕнчи пĕр участокра тухса тăракан «Красноармейский удар» ятлă хаçат 1943 çулхи март уйăхĕнче çапла çырнă:

«Çак кунсенче К. Кольцов аслă лейтенант ертсе пыракан разведчиксен ушкăнĕ çĕрлехи засадăна тухнă. Вĕсем фашистсене çил-тăвăллăн вут-хĕм тăкнипе кĕтсе илнĕ, кĕске вăхăта пынă тытăçура 22 нимĕçе пĕтерсе тăкнă. Çак операцинче Евтухов сержант, Рубан пулеметчик, Ептеев минометчик тата Яковлев, Сергеев, Петряков, Ведикин, Лукьянчиков разведчиксем уйрăмах хăйсен паттăрлăхне кăтартнă». Ку операцие епле иртterни çинчен хаçатра К. Кольцов аслă лейтенант тĕплĕнрех çырса пĕлтерне корреспонденцие те пичетленĕ. Çакăн хыççăн вăл ертсе пыракан разведчиксен пултарулла та паттăр ĕçĕсем çинчен фронт тăршшĕпех ырă ят сарăлнă.

Константин Михайлович Кольцов — чăваш ачи, пирĕн янташ. Вăл 1916 çулта хальхи Канаш районне кĕрекен Анат Сурăм ялĕнче çуралнă. Пĕчĕклех ашшĕнчен тăлăха тăрса юлнăскер, Кĕçтук пурнăçра хура-шур нумай тӳссе ирттернĕ. Анчах Совет влаçĕ

пĕчĕк тăлăхсене те манман, вĕсене мĕн кирлĕ таран вĕрентсе, пăхса ӳстернĕ. Сывлăхĕ енĕпе имшерленсе ҫитнĕ вун пĕр ҫулхи Кĕҫтука пионерсем Хура тинĕс хĕрринчи «Артек» ятлă лагерьне сывалма яраҫҫĕ. Унта Кĕҫтук французсен пĕтĕм тĕнчипе чапа тухнă писательне Анри Барбюса курать, вăл сăмах каланине илтет. Тен, ҫак тĕл пулăвах ăна хăйне те илемлĕ литературă ĕҫне юратма хăват панă пулĕ. «Артекран» таврăннă хыҫҫăн Кĕҫтук сăвăсем ҫырма тытăннă.

Кĕҫех К. Кольцов хальхи Канаш районĕнчи Энтри ялĕнчи колхоз ҫамрăкĕсен шкулне вĕренме кĕрет. Кунта вăл литературă журналĕсем кăларас ĕҫе мĕн пур хастарлăхĕпе хутшăнать. Нумай вулама тытăнать. Вырăс классикĕсемпе чăваш писателĕсен кĕнекисем Кĕҫтукăн юратнă кĕнекисем пулса тăраҫҫĕ. А. Пушкинпа М. Лермонтов, Н. Некрасовпа С. Есенин сăввисене пăхмасăр калама вĕренет. Ф. Гладков, М. Шолохов, А. Фадеев, В. Маяковский тата ытти совет писателĕсем ҫырнă произведенисене вăл темиҫешер хут вуласа тухать. Ҫав вăхăтрах Кĕҫтук районти тата республикăри хаҫатсене ҫырса тăрать.

Колхоз ҫамрăкĕсен шкулĕнчен вĕренсе тухсан, 1934 ҫулхи июнь уйăхĕнче, ăна Канаш районĕнчи «Социализмшăн» (каярахпа «Коммунизмшăн») хаҫат редакцине ĕҫлеме илеҫҫĕ. Кольцов сăввисем ку вăхăтра Шупашкарти хаҫатсемпе журналсенче те пичетленме пуҫлаҫҫĕ ĕнтĕ.

1937—1940 ҫулсенче Константин Кольцов ҫарта

пуранать. Ун чухне те хайĕн юратнă ĕçне пăрахмасть, Тăван çĕршыв чиккинчен кăварлă сăвăсем ярса тăрать, калавсемпе очерксем çырать. Вăл çырнă сăвăсемпе калавсем, пĕчĕк очерксем «Сунтал», «Хатĕр пул» журналсенче, «Чăваш коммуни», «Çамрăк большевик» хаçатсенче пичетленеççĕ. Кĕçтук çăвăн пекех тата Канаш, Шăхасан, Вăрнар районĕсенчи хаçатсемпе та тачă çыхăну тытнă.

Хĕрлĕ Çартан таврăннă хыççăн çамрăк поэт пĕр вăхăт хушши тăван ялĕнче пуранать. Унтан Шупашкарта тухакан «Çамрăк большевик» хаçат редакцийĕнче ĕçленĕ. Кирек ăçта пулсан та, вăл пĕтĕмĕшпех хамăрăн Тăван çĕршыв пурнăçĕпе пуранна.

1941-мĕш çул, июнĕн 22-мĕшĕ. Этемлĕх картĕнчен тухнă ирсĕр фашистсем пирĕн çĕр çине тискеррĕн тапăнса кĕчĕç. Миллионшар совет çыннисемпе пĕрле Кольцов та каллех çар ретне тăчĕ. Çара тухса кайнă чухне вăл хăйĕн «Йытта — йыта вилĕмĕ» ятлă витĕмлĕ сăввине çырса хăварчĕ.

Тăвăл пек тапранчĕ аслă халăх,
Вăл хаяррăн, çиллĕн çĕкленет.
Турама тухатпăр татăк-татăк
Çĕр çинчи чи ирсĕр çĕлене,
—тесе пусланать вăл сăвă.

Малтанах К. Кольцов Муромри çар училищинче вĕренет. Унтан ăна, кĕçĕн лейтенант званине парса, Карели фронтне яраççĕ.

1941 çулхи декабрьтен пуçласа вăл темиçе хутчен те хаяр çапăçусенче пулнă, тискер фашистсене пĕтернĕ. «Эпĕ пĕрре кăна мар вилĕме хире-хирĕç тăрса çапăçнă, пĕрре мар кĕнĕ атакăна. Вилĕм ман куçран тилмĕрсе пăхнă, эсрел хăйĕн хăрушă çавипе мана çулса пăрахма хатĕрлесе тытнă. Пĕрре мар эпĕ вилĕм куçĕнчен пăхнă, эсрел çавине тăпăлтарса илнĕ: эпĕ çĕнтернĕ, эпир çĕнтернĕ. Эпир фашистсене хамăр çĕр çинчен тасатăпăр»,— тесе çырнă вăл тăван ялĕнчи колхозниксем патне.

Фронтри йывăр лару-тăрура та Кĕçтук сăвă-юрă çырма пăрахман. Çав вăхăтра çырнă сăввисем унăн уйрăмах витĕмлĕ, мĕншĕн тесен вĕсем кăварлă чĕререн шăранса тухнă. Вăл çĕршыври хăш-пĕр паллă писательсемпе çыхăну тытнă. Пирĕн вăхăтри паллă писатель Илья Эренбург ăна хăйĕн «Ожесточение» ятлă сборникне сăн ӳкерчĕкĕпе пĕрле ярса панă.

Кольцов хаяр çапăçусенче пиçĕхсе пынă. Командовани ăна темиçе хутчен те тав тунă, каярахпа аслă лейтенант званине панă.

1943 çулхи майăн 8-мĕшĕнче, тăшманпа вăйлă тытăçса çапăçнă вăхăтра, Кĕçтук йывăр аманать. Боецсем ăна çывăхри госпитале йăтсах илсе каяççĕ. Анчах суранĕ унăн амалансах пырать, чĕрине те сиен кӳрет, К. Кольцов вара майăн 11-мĕшĕнче вилсе каять. Ăна Карели çĕршывĕнче питĕ чысласа, хисеплĕн пытараççĕ. «Çапăçăва кайнă чухне эпир нимĕç фашисчĕсене хирĕç паттăррăн кĕрешсе пуçне хунă чăваш ачин — Константин Коль-

цов аслă лейтенантăн вил тăприне куртăмăр. Эпĕ ăна пĕлетĕп, вăл мĕншĕн тата мĕнле вилнине те пĕлетĕп. Эпĕ ун çинчен хамăн юлташсене каласа патăм. Унăн тупăкĕ умĕнче пурте пуçĕсене тайрĕç. Ирсĕр тăшмана тавăрма, ăна йăх-тĕпĕ юлмиччен хамăр çĕр çинчен шăлса ывăтма тупа турăмăр»,— тесе çырса пĕлтернĕ Энтриялĕнчен фронта кайнă пĕр боец хăйĕн ял йышĕсене.

Эпир кунта Кĕçтук Кольцовăн сăвви-юррисене тишкерсе тăмăпăр, ăна вулакансем хăйсемех хаклĕç. Анчах та халиччен этемлĕх курман урăм-сурăм вăрçă вучĕ асар-писеррĕн алхаснă вăхăтра, халапри «вун ик пуçлă çĕлен пек» урса кайса пирĕн хуласемпе ялсене çĕмĕрсе-çунтарса çӳрекен фашистсем пирки:

Мăшкăл витнĕ масар хатĕрлетпĕр
Пытармашкăн фашист йăх-яхне,—

текен çулăмлă сăмахсене Тăван çĕршыва чунтан-чĕререн юратакан сăвăç çеç калама пултарнă ĕнтĕ.

Отечественнăй Аслă вăрçă пынă вăхăтра «Чăваш коммуни» хаçатăн пĕр номерĕнче К. М. Кольцов çинчен: «Пирĕн халăх хăйĕн паттăр та хăюллă ывăлĕсене нихçан та манмĕ, вĕсене ĕмĕрех чĕрере усрĕ»,— тесе çырнăччĕ. Халĕ унăн сăвви-юррисене пухса кăларни чăваш халăхĕн паттăр ывăлне ĕмĕр асăнмалăх палăк пулса тăрĕ.

**С. Аслан.**



# Ҫӗршыв юрри

## ҪӖРШЫВ ЮРРИ

Тундра урлӑ вӗҫет пӗр хӑлат,
Ҫулӗ ун полюс урлӑ выртать.
Ҫил-тӑман ним те мар. Вӑл хӑват.
Вӑл вӗҫевҫӗ. Хӑюллӑн юрлать:
— Хӗвеле юрататӑп, ҫиле те,
Юратап, уҫӑ сывлӑш, сана.
Анчах ҫак тӗнчере ҫӗршыва савнӑ пек
Урӑх эпӗ ниме те савман!

Чăрсăр çил хирĕçет, хирĕçет,
Хумханать, явăнать океан.
Парăс карчĕ çиле хирĕçех
Комсомолец, маттур капитан.
— Хĕвеле юрататăп, çиле те,
Юратап, океанăм, сана.
Анчах çак тĕнчере çĕршыва савнă пек
Урăх эпĕ ниме те савман!

Ылтăн тĕслĕ уй-хир хумханать,
Сас парать-и куллен хапрăк-савăт —
Пур пĕрех хуть хăçан та, ăçта та
Пирĕн юрă хаваслă та савăк:
— Хĕвеле юратап. Атăла та.
Юрататăп, савни, эп сана.
Анчах çак тĕнчере çĕршыва савнă пек
Урăх эпĕ ниме те савман!

*1940 ç.*

## КОЛХОЗРИ КĔРКУННЕ

Ситсе килет тулли телей — кĕр кунĕ,
Ăна колхозник тем пекех хавас.
Ăна савса юрларĕ ирĕк чунăм,
Ăна савса çыратăп çак сăвва.

Ма юрлас мар? Мĕн çук-им тырă-пулă?
Ĕç кунĕсем сахал-им сан та, ман?
Тултартăмăр кăçал та сарă тулă
Амбар тулли, кĕлет кашти таран.

Ак хуларан туянăпăр тем те пĕр
Патшалăха тыр сутнă укçипе:
Сана валли, савниçĕм, пурçăн джемпер,
Хама валли — вĕр-çĕн велосипед...

Ситсе килет тулли телей — кĕр кунĕ,
Ăна колхозник тем пекех хавас.
Ăна савса юрларĕ ирĕк чунăм,
Ăна савса çыратăп çак сăвва!

*1935 ç.*

## ÇУРАЛНА ЯЛ

1

Яла кĕретĕп... Униче...
Ялах-ши ку, пахча-ши?
Ем-ешĕл йывăç çулçисем
Салам калаç ачашшăн.

Урам хушшийĕ икĕ рет
Йăмра та тополь, ăвăс.
Сисетĕн, пурнăç илĕртет:
— Янтратчĕ юрă, сăвăç.

Шăнкăрч вĕлли пек çурчĕсем,
Чăнах, хулари евĕр.
Мухтав, ĕçчен ял-йышăмсем,
Пурнатăр лайăх эсĕр!

Ак урампа автомашин
Кĕрлеттерсе иртет.
— Пĕлесчĕ ман: ку камăн-ши?
Анне: — Колхозăн, тет.

Хире çӳретĕп эп тухса, —
Кунта мĕн чул пуянлăх!
Вăл тинĕс евĕр янанса
Выртать чун савăнмалăх.

Кĕлешмĕш, тунсăх кĕвĕ пек,
Юхайнă, тет, авал.
Пĕве халь. Пĕлтĕр çăвĕпех
Ĕçленĕ пĕтĕм ял.

Çапла çав, — терĕ секретарь, —
Йăлт тунă хамăрах.
Ĕни те сĕт нумай парать,
Сысни те самăрлать.

Кашни яш-кĕрĕм вĕренет
Кăмăллакан ĕçе.
Петя чутлать-тĕк пĕрене,
Энтри, ав, тимĕрçĕ.

Татах та пур-ха ĕмĕтсем,
А ĕмĕт вăл — хăват.
Паян-ыран, ака пĕтсен,
Водопровод тăвас!»

*1941 ç. Шупашкар,*

## МИШАВАЙ

Укăлча патĕнче ват юман,
Каш! кашлать кĕрхи çил аснă май.
Савăнса хире тухрĕ паян
Пирĕн çамрăк ĕçчен мишавай.

Епле ырă колхоз хирĕнче,
Анчах час улшăнать вăл сăнран.
Вăл курать: тăвайкки айĕнче
Выртса юлнă пĕртен пĕр йăран.

Вăл шутлать: çав йăран хуçине
Паянах ман çитсе курмалла.
Унпала ман ыран-виçмине
Йăрана пĕтерме тухмалла.

...Тепĕр кун ват мучи пухура
Сăмах илчĕ: «Хам пулнă ухмах...
Кĕмелле пулнă çав тахçанах.
Эп ĕçлесшĕн пĕрле, колхозра!»

*1936 ç.*

## ЭТЕМ ÇУРАЛНИ

Хăлтăр-халтăр хуп сăпка,
Амăш ачине лăпкать:

— Чуччи, чуччи сиктерме
Тунă çĕмĕрт сиктĕрме.

Лăппи-лаппи лăпкама
Сана хунă сăпкана.

Сăпки çамрăк хăваран,
Тĕпĕ тикĕс хăмаран.

Çынсен ачи — сĕл кĕлти,
Пирĕн ачи — тул кĕлти...

Эс çуралтăн шăрăхра,
Тырă вырнă вăхăтра.

Пурнăç йывăр та хаяр,
Ăшăм çунать сахал мар.

Тепĕр чух эп тарăхап,
Сана, ывлăм, ылханап...

Сăпкуна эп сиктереп,
Санпала пĕрле йĕреп...»

---

Ĕлĕк çын çапла çуралнă,
Амăшĕ çапла юрланă.

* * *

Хĕвеллĕ ир. Хуллен пыратăп
Ем-ешĕл аслă урампа.
Пăртак кайсассăн танлашатăп
Ача çуратмалли çуртпа.

Ак тухрĕ тăпăлкка хĕрарăм
Упăшкипе пĕрле унтан.
Телей сунса пуçа эп тайрăм,
Хастар бригадира курсан.

«Колхоз автомашинă пачĕ,—
Тет упăшки,— сума суса».
Хĕрарăмăн пит-куç çуталчĕ,
Вăл йăл-йăл кулчĕ савăнса.

---

Çын çуралать телейлĕ халь,
Сăпка юрри те урăх халь!

*1936 ç.*

## ÇАМРĂКЛĂХ

Çамрăклăх! Эсĕ телейлĕ,
Салхусăр, кичемсĕр тинех.
Кашни кун халь пирĕн хĕвеллĕ,
Хĕвел ăшăтать кашнинех.

Çамрăклăх! Эсĕ тăратрăн
Уяв вăйййисен картине.
Эп тухрăм та юрă шăратрăм
Чĕре тĕпĕнчен тухнине.

Çамрăклăх! Кĕтĕн, вăратрăн
Мана эс йăваш ыйхăран.
Эп тăтăм та тухрăм, шăвартăм
Çĕлен пек хура ăйăра.

Утлантăм, тапрантăм, çил тейĕр,—
Çĕршыв чиккине çул выртать.
Урипе çĕр çине перĕнмесĕр
Хушка урхамах ыткăнать!..

## БЕССАРАБИ

Аслă Союзăн тăван йышĕнче
Юрла, Бессараби, хĕвеллĕ тĕнче!

Миçе çул хушши эс ăмсаннă ялан:
«Хăçан-ши çĕкленĕ телейлĕ ялав?»

Ватасчĕ тесе йывăр пусмăр чулне,
Эс пăхнă, пуç тайнă Тирасполь енне.

Кĕрле, анлă Днестр,
Шавла, чăрсăр Прут,
Тăварлă куççулĕ паян пире ют!

Тухаççĕ паян уява йĕкĕтсем,
Çĕмĕрт куçлă хĕрсем — ытарми пикесем.

Тухать пĕтĕм халăх — юрлать те ташлать,
Ирĕк илнĕ куна савăнса палăртать.

Ырхан та чуман вăкăрсем хыçĕнчен
Текех тар тăкса утмĕ выçă хресчен,

Кунта паянтан телей тупĕ этем,
Ешерĕç тулли виноград хирĕсем.

Харкам хăй хуçа хăйĕн çĕрĕ çинче,
Аслă Союзăн тăван çемйинче.

*1940 ç.*

Вĕсене халь ертсе кайрĕ
Герой Тихон Бумажков *.

Бронепоезд çĕлен евĕр
Ката витĕр чашкăрать.
Отряд тухрĕ: — Эй, атьсемĕр,
Çул ан парăр кашкăра!

Генерал салхуллă темшĕн,
Çурри чĕрĕ, çурри — вил.
— Ак сана çĕршыв-аннешĕн,
Акă хамшăн! Акă ил!

Эшелон тӳнет. Тӳнеççĕ
Тупăсем вăркăнайса.
Пульăсем ши-ши ӳлеççĕ,
Пăрлă çумăр çутарса.

«Ĕмĕрте утса кураймăр
Ленинград урамĕпе.

* Т. Бумажков — Белоруссири партизансен командирĕ. Ăна СССР Верховнăй Совечĕн Президиумĕ Совет Союзĕн Геройĕ ятне панă *(К. Кольцов асăрхаттарни)*.

Халăхпа сире туратпăр
Купăста туранă пек!

Киевра та киленеймĕр,
Мускавра та пулас çук.
Каллех пирĕн пулĕ Неман,
Пирĕн пулĕ Днепр, Буг!»

Тапранса каяççĕ пурте,
Ыткăнаççĕ малалла.
Хĕç-пăшал та çĕçĕ-пуртă
Çул пӳлеççĕ тăшмана.

*Карели фрончĕ.*

## ПОЛИТРУК

Я вăнаççĕ урăм-сурăм
Хумсем çиллĕ каçсенче.
Салтаксем юрлаççĕ юрă
Хасанти ĕçсем çинчен.

Кунта пулнă пирĕн паттăр,
Вашаватлă политрук.
...Çĕнтерӳллĕ çакă тапхăр
Ĕмĕр манăç пулас çук.

Хăрататпăр, терĕç пулĕ
Çав куштан японецсем.
Пирĕн тар-етре е пульă
Тĕл тивет пит, пенĕçем.

— Харăс çĕкленетпĕр,— терĕ
Политрук,— атакăна.

Кам хăюллă, çав çĕнтерĕ,
Çирĕп тыт винтовкăна!

Ярса пусрĕ çеç виç утăм,
Персе анчĕ вăл çĕре.
Шан эс, шан эс, политрукăм,
Çĕнтеретпĕр пур пĕрех!

Ротăсем хăватлăн тухрĕç
Политрукшăн тавăрар!
Самурайсене тĕп турĕ
Пирĕн вăйлă Хĕрлĕ Çар.

Явăнаççĕ урăм-сурăм
Хумсем çиллĕ каçсенче.
Салтаксем юрлаççĕ юрă
Паттăр политрук çинчен.

*1938 ç. сентябрь*



# Юрату

## ÇЫРУ

Эп каллех аса илетĕп, акă,
Тĕлĕкри пек инçетри каçа.
Ял-ял урлă аллăма тăсатăп,
Ту-сăрт урлă ĕмĕтпе каçап.

Каçсерен тухатăп та пăхатăп —
Хăш тĕлте ларать-ши пирĕн ял?
Уяври пек хумханать пуль Атăл,
Чăрсăр çилĕ хумсемпе вылять.

Халь унта чи ҫепӗҫ юрӑ-ташӑ
Хӑна пек ҫӳрет килрен киле.
Пирӗн ҫамрӑк килӗшӳллӗ сасӑ
Араскалшӑн ҫеҫ вӗҫме пӗлет.

* * *

Ӑс илен пуль эсӗ, савнӑ тусӑм,
Шухӑшлан-тӑр: мӑшӑру инҫе.
Тинкерет тавралӑха ман куҫӑм,
Эп тӑрап ҫӗршывӑн чиккинче.

Умра тӗттӗм, пӗлӗт те хӑп-хӑмӑр,
Тавраналӑ ҫапсан тӗтре шӑрши —
Тен, тӑшман тӑкасшӑн вутлӑ ҫумӑр,
Кӑларасшӑн урӑм-сурӑм ҫил.

Вара эп ҫиҫтерӗп ҫивӗч ҫиҫӗм
Е ҫаптарӑп чи хаяр аҫа.
Ун чухне, шанап сана, савниҫӗм.
Эс те тухӑн хӗҫ-пӑшал ҫакса.

Тӑшмансемшӗн ӳсмӗ пӗр улма та,
Хапсӑнаймӗҫ пирӗн пахчана.
Эс вӗрент халь большевик пулмашкӑн
Иксӗмӗр кун панӑ ачана.

*1937 ҫ.*

## АЧАРАН ПĔРЛЕ ỸСНĔ ХĔРЕ ЛЮДМИЛĂНА

I

Иксĕлми пирĕн аслă тĕрек,
Анне пана пехил — ман хăват.
Инкекрен хăтарсассăн çĕре,
Ачаран пĕрле ӳснĕ хĕре
Куç тулли эпĕ курăп, тăван.

II

Шалчи тулĕ тăшманăн кĕçех,—
Çавăнпа çапăçатпăр эпир!
Ачаран пĕрле ӳснĕ хĕре
Куç тулли эпĕ курăп пĕрех
Паян мар-тăк, ыран — çутă ир.

## III

Ан кулян эс, ёҫле те кӗреш,
Сая каймӗ эпир тӑкнӑ юн.
Ачаран пӗрле ӳснӗ хӗре
Куҫ тулли эпӗ курӑп пӗрех,
Ҫитӗ, тусӑм, эпир кӗтнӗ кун.

*Ҫапӑҫакан ҫар, 1942 ҫ.*

## КЁТ МАНА

Кёт мана, чунтан юратнă хĕрĕм,
Сан пата эп пур пĕр таврăнап.
Ахаль мар калаççĕ: «Пурнăç йĕрĕ
Вăл çăка çулçи пек çаврака».

Кĕт мана, кĕт, çĕмĕрт куçлă хĕрĕм,
Çĕнтерӳллĕ пулĕ пирĕн çул.
Тăвăлла кĕрлет халь кунĕн-çĕрĕн
Юлашки хĕрӳллĕ çапăçу.

Эпĕр савнă аслă Совет çĕрĕ
Нихăçан та пулмĕ чурара.
Кĕт мана, кĕт, мăкăнь питлĕ хĕрĕм,
Çĕмĕртсем шап-шурă вăхăтра!..

*1942 ç., апрель.*

## ТУНСĂХ

Юрататтăн эс Кĕлешмĕш
Хĕрринче пĕр вырăна,
Унта шăвараттăн эсĕ
Хушка пуçлă ăйăрна.

Вĕлтĕртетрĕ сарă çулçă,
Çитрĕ тулăх кĕркунне.
Тухса кайрăн, чунăм, эсĕ
Инçе чикĕ хĕррине.

Çурла евĕр çамрăк уйăх
Ишет анлă тӳпере.
Эс куç пек сыхлатăн, тусăм,
Хамăрăн тăван çĕре.

Кунсем иртрĕç, çулсем иртрĕç,
Тунсăхларăм, тупата.
Кĕтрĕм-кĕтрĕм те, килмерĕн...
Хам пырам, ак, сан пата...

*1939 ç., Белоруссия.*

## САВНА ТУСНЕ КЕТСЕ ИЛНИ

Серте татса çӳрет пикеçĕм,
Утать, итлет вăл тăп тăрса.
Куккук ирхи юрра пикенчĕ,
Сар кайăк ячĕ шăхăртса.

Тулли çаран кун-çулшăн уçă.
Сукмак çине тухсассăнах,
Эс те уçса яратăн, тусăм,
Шăнкрав пек уçă сассуна.

Ахах пĕрчи пек сывлăм шывĕ
Мĕн чул шурут çулçи çинче!
Пухса илесчĕ те пĕр ывăç
Çакасчĕ кăкăр туллиех.

Кĕç аллуна тытатăн, хĕрĕм,
Сар пурçăн çипĕ, кĕмĕл йĕп;

Эс тӗрлекен чечеклӗ тӗрӗ
Асаматран та кăмăллă.

Шап-шур ҫеҫкеллӗ ҫӗмӗрт тӗмӗ
Ҫӗклет сан ҫамрăк кăмăлна.
Ак, чу! чӗтренчӗ тăрă пӗлӗт,
Шăвать хăватлă самолет.

Ак, парашют та сарăлать,
Тӳрех вăл хӗр тӗлне анать.

— Аван-и, кӗтнӗ ырă кун?
— Эп ҫитрӗм, тусăм, аванах...

Вӗҫевҫӗ анчӗ те ҫӗре
Чуп турӗ хыттăн сар хӗре.

*1939 ҫ.*

## ЛИРИКАЛЛА КАЛАÇУ

...Сарă кайăк евĕрлĕ юрлар-и,
Ăмăрт кайăк евĕрлĕ вĕçер.
Çутçанталăк киленме пуçларĕ;
Чечек сарăлнă уçланкă евĕр
Киленме пуçларĕ пирĕн çĕр.

Кĕркунне çитет пулин те çепĕç.
Ав, куратăн, хĕп-хĕрлех пилеш.
Çак сăна курсассăн, темшĕн эпĕ
Ас илетĕп час-часах киле,
Атăла курассăм ман килет.

Унта вĕç-хĕррисĕр илĕртеççĕ
Хуравăшăн тарăн кӳллисем.
Пӳрчĕсем ун: хăнана кĕр, теççĕ.

Ларсам, теççĕ сарă саккисем,
Тутанса пăх, теççĕ сачĕсем.

Унта халĕ ешĕл катасемшĕн
Пин-пин тĕслĕ чечексем çунаç.
Сад тулли, юмах пек, этемсемшĕн
Улмуççийĕн улмисем ташлаç,
Çулçисем хаваслăн ал çупаç.

## ХЁРСЕН ЮРРИ

Пир ҫапаҫҫӗ сар хӗрҫем,
Шӑрataҫҫӗ юрӑсем:
Савни пур та инҫетре.
Инҫетре вӑл, чикӗре.

Савни памӗ тӑшмана
Ҫӗршывӑма таптама.
Савни сырнӑ ҫырусем —
Чӗрери ӑш сӑмахсем.

Савнисене манмӑпӑр,
Урӑх качча савмӑпӑр.
Тӑмпӑр-тӑмпӑр-тӑмпӑртӑк,
Пир ҫапмасӑр тӑмӑпӑр!..

*1941 ҫ.*

## МАЛТАНХИ ЮРАТУ

— Ав, куратни, — терĕн эсĕ, —
Тӳпере мĕн йăлтăрать?
Савассу мана килсессĕн,
Эс чуп ту çав çăлтăра.

Çĕрĕпех çӳрерĕм эпĕ
Чуп тăвасшăн çăлтăра.
Анчах ĕмĕтĕм çитмерĕ
Саншăн çуннă вăхăтра.

Ĕнер каç кăна чуп турăм
Сана эпĕ пăлтăрта.
Манăн çăлтăр — эсĕ, тусăм,
Эс те çутă çăлтăрах!

— Ав, куратни,— терĕн эсĕ,—
Мĕн çап-çутă улăхать?
Савассу мана килсессĕн,
Ытала çав уйăха.

Икĕ каç çӳрерĕм эпĕ
Ыталасшăн уйăха.
Анчах ĕмĕтĕм çитмерĕ,
Кайрăм тарăн хуйăха.

Ĕнер каç эп ыталарăм
Сана ешĕл улăхра.
Манăн уйăх — эсĕ, терĕм,
Эс те çутă уйăхах!

---

# ТУПМАЛЛИ

стр.

Кеçтук Кольцов . . . . . . . 3

**Çĕршыв юрри**

Çĕршыв юрри . . . . . . . . 8

Колхозри кĕркунне . . . . . . . 10

Çуралнă ял . . . . . . . . 11

Мишавай . . . . . . . . 14

Этем çурални . . . . . . . . 15

Çамрăклăх . . . . . . . . 18

Бессараби . . . . . . . . 19

Хĕр юрри . . . . . . . . 21

Манăн çăлтăр . . . . . . . . 23

**Фронтра**

Йытта — йытă вилĕмĕ . . . . . . 24

Фронтра . . . . . . . . 26

Карели фронтĕнчен . . . . . . . 28

Иккĕн . . . . . . . . 30

Отряд . . . . . . . . 32

Политрук . . . . . . . . 35

**Юрату**

Çыру . . . . . . . . . 37

Ачаран пĕрле ӳснĕ хĕре Людмилăна . . 39

Кĕт мана . . . . . . . . . 41
Т у н с ă х . . . . . . . . . 42
Савнă тусне кĕтсе илни . . . . . 43
Лирикăллă калаçу . . . . . . . 45
Хĕрсен юрри . . . . . . . . 47
Малтанхи юрату . . . . . . . 48

КОНСТАНТИН КОЛЬЦОВ

**Стихи**

На чувашском языке

Редактор **Н. А. Александров**
Художественный редактор **Э. М. Юрьев**
Технический редактор **Г. П. Петров**
Корректор **З. Г. Федотова**

НТ 02311. Сдано в набор 1/VIII-1963 г.
Подписано к печати 4/Х-1963 г. Формат 84×108 1/64.
Объем 1,42 печ. л., уч-изд. л. 1,1. Заказ № 2544.
Изд. № 100. Тираж 2500 экз. Цена 6 коп.

Типография № 1 Министерства культуры ЧАССР
Город Чебоксары, ул. Володарского, 5.

Цена 6 коп.